1

Г.Я.Х И Р Б Ю

Авторский экземпляр Г. Хирбю

5. IX 67 г.

# Н А Р С П И

ПРОЛОГЛĂ, ВИÇĔ ПАЙЛĂ, 6 КАРТИНĂЛЛĂ

О П Е Р Ă Н

Л И Б Р Е Т Т И

/Ку либреттăна К.В.Ивановăн

"Нарспи" поэми тăрăх çырнă/

3

## ПРОЛОГ

Авансцена. Солистсем, хор

Баритон: Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере

Тенорпа бас: Вӑйли ҫук та этемрен:

Баритон: Шывсем ҫинче ҫӗр ҫинче

Тенорпа бас: Хуҫа пулса вӑл тӑрать.

Арҫынсен квартечӗ: Анчах вӑйлӑ этем те
Хӑй тӗнчине пӑхӑнать.
Укҫапала эрехех
Ҫынна ӑсран кӑларать.

Шалти фонра Нарспи иртсе каять, унӑн хусканӑвӗнче вӑл чунтан татӑлни, пӑлханни сисӗнет!

Хор /халах/: Ах, самана, самана!
Ҫын чӑтайми самана!
Ах, кӗн-асаплӑ пурӑнӑҫ,-
Тамӑкри пек самана!
Мӗн чул ҫынна тӗп туран эс,
Эс ылханлӑ самана.

Ах, самана, самана!
Мӗнле чӑтар-ха сана?
Мул тӗнчийӗн самани
Йывӑр-ҫке ҫын чӑтайми